• *Криминал*

# А тата Б пăрăх çинче ларнă...

**Машинист пулăшуçи тепловоз бакĕнчен юхтарса илнĕ соляркăна икĕ çул сутнă. Яланхи клиент топливо туянма лимузинпах килсе çӳренĕ. Кунашкал истори Раççейре кăна пулма пултарнă-тăр.**

Операцин финал тапхăрĕнче вĕсене экономикăри преступленисемпе кĕрешекен оперативниксемпе транспорт полицийĕн спецназĕ тимлĕ сăнанă ĕнтĕ. Вăрттăн вырăнтан Шупашкар станцийĕн чукун çулĕсенчен пĕрин çинчи ĕç-пуç питĕ лайăх курăннă. Акă тепловоз килсе чарăнать. Николаев космонавт урамĕнчи «Восход» гараж комплексне, станци çывăхĕнче вырнаçнăскере, кăвак «Вольво» кĕрет те хĕрринчи бокс патĕнче чарăнать. Водитель гаража пысăк канистрсем илсе кĕрет – хальлĕхе вĕсем пушă-ха. Акă оперативниксем лайăх паллакан машинист пулăшуçи курăнса каять, иномарка хуçипе калаçса илнĕ хыççăн вăл тепловоз патне утать...

Çур сехет те иртмест – лимузин хуçи гаражран хăйĕн канистрĕсене илсе тухать. Вĕсем халь йывăр, тимĕр çекĕлпе çаклатса сĕтĕрет. Вĕсене «Вольво» салонне хума чукун çул ĕçченĕ пулăшать. Çак «тандема» тытса чарнă хыççăн транспорт полицейскийĕсем вĕсен чеелĕхĕнчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ: гаражран топливо бакĕ патне 40 метр тăршшĕ шланг тăснă...

Икĕ еншĕн те усăллă çак ĕçтешлĕх 2009 çулхи хĕллех пуçланнă. «Солярка пур-и?» «Пур!» Çак ыйтупа хуравран çирĕп çыхăну йĕркеленнĕ. Уйăхсерен телефонпа шăнкăравласа тĕл пулу пирки калаçса татăлнă. Кашнинчех – 100-150 литр солярка, чукун çул ĕçченĕн кĕсйинче – 1-1,5 пин тенкĕ. Клиент топливăна литрне 12-13 тенкĕпе туяннă, вăл унăн тепĕр автомобилĕ, ГАЗ «Валдай» валли, кирлĕ пулнă. Сутуçăшăн вара – шалу çумне аван хушăм.

Ĕçтешсем пĕр-пĕрин пирки пĕлсех кайман, тепĕр тесен пĕр-пĕрин ятне пĕлни те туслăх валли çителĕклĕ пулнă. Машинист пулăшуçи, следстви çирĕплетнĕ тăрăх, пĕтĕмпе 2,5 тоннăна яхăн дизтопливо вăрлама ĕлкĕрнĕ.

ШĔМĕн транспорт çинчи Чăваш лини пайĕн следователĕ Ирина Казначеева каланă тăрăх – айăпланакан хăй преступлени тунине лайăх пĕлнĕ, чарăнас шухăш та пулнă, анчах кăштах пайта курас тени кашнинчех вăйлăрах пулнă. Хăйне тытса чарнă кун 52-ри арçын тепловозран 450 литр солярка юхтарса илнĕ. Аппетит тени ӳссех пынă çав. Пĕри ĕç çухатасран хăраман, теприне сывлăхне сиенлесси шиклентермен. Солярка туянаканшăн та йывăр канистрсем йăтни ахаль иртмен вĕт – грыжа кастарма тивнĕ, анчах пур пĕр гараж комплексне çӳреме пăрахман.

Машинист пулăшуçине – çулталăклăха, унăн ĕçтешне 10 уйăхлăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. Чăн та, условнăй майпа кăна, ĕç вырăнĕнчен вĕсене лайăх характеристикăсем пани çалса хăварнă.

■ Ольга ПАВЛОВА

• *Шур сухал сакки*

**Çĕнĕ ярăмра ялсенчи пысăк тавра курăмлă, пурнăç тути-масине лайăх пĕлекен, ăста та хисеплĕ мучисемпе паллаштарăпăр. Ăна йĕркелес кăмăлăмăр иртнĕ çыравра арçынсен, çав вăхăтрах чăвашсен йышĕ чакнипе çыхăннă.**

**Çак кунсенче Канаш районĕнчи Кăшнаруйне – Чăваш халăх писателĕ Николай Терентьев патне – çитсе килтĕмĕр. Паллă драматург ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче 87 тултарать. Мăшăрĕпе Мария Ивановнăпа /вăл Трак тăрăхĕнчи Вутлан ялĕнчен/ тата хĕрĕпе Еленăпа пурăнать.**

# *Чăваш халăх писателĕ Николай Терентьев:*
# «Эпĕ чунпа – ял çынни»



*• Николай Терентьевич мăшăрĕпе Мария Ивановнăпа.*

**– Николай Терентьевич, ялта аван-и?**

– 1990 çултанпа эпир кунта. Кăшнаруйне килнĕшĕн питĕ хĕпĕртететĕп. Эпĕ, тĕрĕссипе, чунпа ял çынни. Хула шăв-шавне килĕштерейместĕм.

**– Куна епле ирттеретĕр? Çыратăр-и?**

– Шăхале çити чупатăп. Унта çитсе килме – 6 çухрăм. Маларах кунтан 5 çухрăмра вырнаçнă Шуркассинех çитсе килеттĕм. Хушăран йĕлтĕрпе ярăнатăп. Анчах унпа асаплăрах, вăй ытларах кирлĕ. Юр хыратăп. Халĕ темиçе çул каялла хам çырнисене вулама пуçларăм. «Мĕн-ши вăл телей», «Пушар лашине» аса илтĕм. Халĕ пулсан мĕнле хайлăттăм-ши тесе шухăшлатăп.

**– Эсир сухал та ӳстеретĕр иккен... Кам вăл сирĕн шухăшăрпа шур сухал?**

– Арçын пенси çулне çитиччен шур сухал мар. Сухалĕ шуралнă, пуçĕ кукшаланнă пулсан та. Шур сухал «аксакал» сăмахпа пĕлтерĕшлĕ. Эпĕ сухалăма сумлăрах курăнас тесе ӳстеретĕп.

**– Сирĕн ĕмĕр вăрăм пулнин вăрттăнлăхĕ мĕнре?**

– Пурнăçпа мĕнле çыхăнса, çывхарса тăнинчен те килет пулĕ вăл. Ытах та пĕрмаях ахлатса, айлатса ларсан чун хуçăлать, сивĕнсе пырать. Ырă хавхаланăва тытса пыраймастăн вара.

**– Ăна тытса пырас тесе эсир мĕн тăватăр?**

– Ятарласа нимĕн те тумастăп. Манăн çынсемпе питĕ калаçас килет. Эпĕ хама мухтаса каламастăп, анчах манра усаллăх çук. Ырăлăх, ăшăлăх тапса тăрать.

**– Ырă ырăпах таврăнать...**

– Таврăнать çеç те мар, çавă тăрса юлать. Чунра юлать те – пурнăçĕ те урăхларах, малашнехи кун-çула тытса пыма çăмăлрах.

**– Чăваш Енре 100 çула çитекен арçын питĕ сахал...**

– Ун пеккисем, шел те, çук çав. Арçын сахалрах пурăнни хĕрарăм вăйлăрах пулнинчен килет. Философире, историре чăваш хĕрарăмĕ артан хăватлăрах пулнă. Арçынсем кӳренеççĕ мана ун пек каланăшăн. Анчах ку – чăнлăх. Ку вăл арçын начар пулнине пĕлтермест. Шăпа çапла килнĕ. Турă пулăшнипе малашне те çапла пултăрччĕ.

**– Турра ĕненетĕр-и?**

– Çын умĕнче, чиркӳре мар, ăшра ĕненетĕп.

**– Чун киленĕçĕ пур-и?**

– Мунча кĕме, çапăнма юрататăп. Çулла пахчара ĕçлетĕп: утă çулатăп, вăрмана çӳретĕп, качакасем валли милĕк хатĕрлетĕп. Виçĕ качака, чăх усратпăр. Час-часах Чехова, Достоевские вулатăп.

**– Хăвăра телейлĕ теме пултаратăр-и?**

– Эпĕ телей мĕнне пĕлместĕп те. Çырнисене пичетлени маншăн телей мар вăл. Хам пĕлменнипех пьеса ятне те «Мĕн-ши вăл телей?» тенĕччĕ. Ман шухăшăмпа, юратни – телей. Юрату туйăмĕ халĕ те сӳнмен. Анчах юрату вăл тĕрлĕ çулта тĕрлĕрен. Пытармастăп: мăшăрăм ăçта та пулсан кайсассăн час килмесен шырама тухса утатăп.

**– Мария Ивановнăпа 50 çул килĕштерсе пурăнатăр. Мĕнле паллашнă эсир?**

– Тĕп хулари «Спартак» стадионра конькипе ярăнма юрататтăм. И.Я.Яковлев ячĕллĕ пединститутра биологипе хими факультетĕнче вĕренекен палланă пĕр студенткăпа ярăнаттăмăр. Пĕррехинче вăл пăр çине хваттерте пĕрле пурăнакан тантăшне ертсе пычĕ. «Марийăна та ярăнма вĕрентер-ха», – терĕ. Пики, чиперскер, мана тӳрех кăмăла кайрĕ. Кăштах вĕренкеленĕ хыççăн çаврăнмалли вырăнта ӳкенçи турăм та: «Ай, сана та капла ӳкеретĕп-çке тесе ыталарăм та чăпăрт чуп туса илтĕм», – «Ай-яй, эсĕ мĕн хăтланатăн?» – сехĕрленсе ӳкрĕ вăл. Çавăнтанпа туслашрăмăр. Виçĕ çул çӳресен пĕрлешрĕмĕр. Çемье чăмăртасан та чылай çул пĕрле конькипе ярăнтăмăр. Ачасене те стадиона пĕрле илсе каяттăмăр. Вĕсем çунашкапа ярăнатчĕç, эпир пăр çийĕн «эрешсем тăваттăмăр».

Маруçпа /мăшăрне Мария Ивановнăна çапла чĕнет вăл. – **Авт.**/ тăвату ача – икĕ ывăлпа икĕ хĕр пăхса ӳстертĕмĕр. Иккĕшĕ Санкт-Петербургра ĕçлесе пурăнаççĕ. Икĕ çул каялла ывăлăм Илюш вăхăтсăр çĕре кĕни хуçса хăварчĕ пире.

**– Эсир счетоводра та, учительте те, Чăваш драма театрĕн артистĕнче те, литература пайĕн заведующийĕнче те вăй хунă. Калăр-ха, ача чухне кам пулма ĕмĕтленнĕ?**

– Писатель пулма ĕмĕтленмен. */Кулать/*. Учитель профессийĕ пирки шухăшланă. Эпĕ улттăрах шкула кайнă. Пире питĕ хитре, çамрăк учительница вĕрентетчĕ. Эпир, арçын ачасем, Евдокия Леонтьевнăна юратса пăрахнăччĕ. Пĕрре вăл туалета кайнине куртăм та: «Çак хитре хĕр те унта çӳрет-им», – тесе хытах тĕлĕнтĕм...

Манăн чăваш чĕлхипе тата литературипе пĕлӳ паракан пулас килетчĕ. Шел, мĕн пурĕ те 6 çул кăна вĕрентейрĕм. Лайăхчĕ учитель ĕçĕ, юрататтăмччĕ ăна. Халĕ Кăшнаруйĕнче шкул та çук. Ялта ачапча та сахал. Ман шухăшăмпа ялта – пĕр ача юлсан та пĕлӳ çуртне хупмалла мар. Шкул çук тăк ял пĕтет.

**– Николай Терентьевич, театрсăр тунсăхламастăр-и?**

– Тунсăхламасăр, питĕ каяс килет театра. Манăн пьесăсемпе лартнă спектакльсенче чи малтанхи рольсене вылянă Нина Яковлевăна, Нина Григорьевăна курас килет. Юлашки хут театрта икĕ çул каялла – хам 85 çул тултарас умĕн пулнăччĕ. Халĕ радиопа паракан, телекуравпа «Культура» каналпа кăтартакан чăваш спектаклĕсене пăхса йăпанатăп. Нумаях пулмасть «Куккук çаплах авăтать» спектакле итлесе хĕпĕртерĕм. «Хамсăрах кăштах пырать-ха манăн искусствăри пурнăçăм», – тесе шухăшларăм.

**– Эсир чылай роль калăпланă. Çапах та хăшĕ уйрăмах асра?**

– Эпĕ тĕп рольсене вылянă. Осиповăн «Айтарĕнче» – Сентиере, Ржановăн «Энтипĕнче» Ахмара калăпланă. Пĕрре – кулак, тепре юратса пăрахнă каччă ролĕсене выляттăм. Вера Кузьминапа, Тая Ерусалановăпа сцена çине тухаттăм. Айтарпа Ахмар – чи асра юлнисем.

**– Çыншăн хăй çырнă кашни хайлав хаклă...**

– «Мĕн-ши вăл телей?» – чи хакли, ăшран тухни. «Куккук çаплах авăтать» тата «Пушар лашине» те асăнам. «Пушар лаши» – пенсие тухнă ватăсем пĕр-пĕрне юратса пăрахни çинчен. Сăмах май, пурнăçран илнĕ сăнарсем вĕсем.

**– Аçăрпа аннĕр сирĕн пултарулăхри çитĕнӳсемшĕн хĕпĕртетчĕç-и?**

– 1937 çулта, эпĕ вун пĕрте чухне, аттене тытса кайрĕç. Анне 5 ачапа юлчĕ. Атте вăл вăхăтра Канашри вакун юсакан заводра ĕçленĕ. Самана пирки калаçкалама юратнă... Вунă çул иртсен атте Магаданран янă çырăва илтĕм. Унта вăл таврăнасси пирки пĕлтернĕччĕ. Канаша кĕтсе илме кайрăм та – атте мана палламасть...

Атте кăштах кулянчĕ эпĕ артист пулнăшăн. Артист – камитçĕ-çке-ха вăл. «Эпĕ писатель пулатăп», – тесен çеç кăштах лăпланчĕ. Эпĕ ун чухне «Ĕлĕкрен туслисем» пьеса çырнăччĕ ĕнтĕ. Аннен, Хветуран, пурнăçĕ питĕ асаплă иртрĕ. Театр, артист пурнăçне ăнланман та вăл. Тĕрĕссипе, унта çӳреме вăхăчĕ те пулман.

**– Çыравçă хисепре-и паян?**

– Ялта Хĕвел тухăç урамне Терентьев ятне парасшăнччĕ. Хирĕçлерĕм: çын пурăннă чухне унăн ятне пани килĕшӳсĕр терĕм. Пĕрре Çамрăксен театрĕн артисчĕсем килсе кайнăччĕ. Чурачăк шкулне тĕл пулăва чĕннĕччĕ.

**– Театра, паянхи драматургие епле хаклатăр?**

– Осипов, Кошкинский çырнисем маншăн ун чухне те, халĕ те – классика. Паянхи драматургсен те шухăшлавлă пьесăсем пур. Шел те, кулăш туйăмĕпе çырма пĕлейместпĕр... Чăваш театрĕ чăн та аталаннă. Вăл аталанмасăр пурăнаймасть. Шел, çамрăксен театрĕн хăйсен çурчĕ пулаймарĕ.

**– Мĕнле ĕмĕт-тĕллевпе пурăнатăр?**

– Арăм ытла аякка ан кайтăрччĕ, часрах таврăнтăрччĕ тетĕп. */Кулать/*. Пьесăсен пуххине кăларасчĕ... Тĕллев пулаймарĕ ĕнтĕ вăл, ĕмĕтĕмре çеç юлать-тĕр... Çырнисен пуххин 1-мĕш томĕ 1995 çулта çапăнса тухнăччĕ. Манăн 10 ытла пьеса пач пичетленмен. Пĕр-икĕ хутчен кĕрсе тухрăм кĕнеке издательствине. «Николай Терентьевич, укçа кирлĕ», – теççĕ. Тен, эпĕ вĕсен йĕрки-куркине ăнланса пĕтерейместĕп. Ĕлĕк Мускаври «Советский писатель» пьесăсемшĕн пире хамăра гонорар тӳленĕ...

**– Укçаллисем темĕнле кĕнеке те кăлараççĕ паян...**

– Ытах та малашне те кĕнекесене çакнашкалах пичетелсе пырсан илемлĕ литература пĕтме те пултарать. Халĕ ытларах чĕлхе туйăмĕсĕр «шĕвĕр» çынсем «шăтарса» тухаççĕ. Мĕншĕн кăлараççĕ-ши вĕсем çав кĕнекесене? Кăштах авторитет тăвасшăн-ши?

**– Николай Терентьевич, пурнăç çулне тепĕр хут утса тухма май килнĕ тĕк çав йĕрех суйлăттăр-и?**

– Çак çулпах утăттăм. Литература анинех сухалăттăм, искусство çынниех пулăттăм.

**– Кăсăклă калаçушăн тавах сире. Çирĕп сывлăх, лайăх кăмăл сунатпăр.**

– Хăвăра тав манманшăн, тепре хăçан килетĕр ĕнтĕ?..

■ Роза ВЛАСОВА.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ